27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
АВГУСТ
22
ЫТЛАРИКУН
165(6660) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧӐВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Совет авиацийӗн 1941 çулхи июнӗн 22-мӗшӗпе 1944 çулхи августӑн 18-мӗшӗ хушшинчи çапӑçӑвӗсен итогӗсем

Пирӗн авиаци, пӗтӗм Хӗрлӗ Çарпа пӗрле, виçӗ çул ытла ӗнтӗ фашистла нимӗç захватчикӗсене хирӗç ӑнӑçлӑн кӗрешет. Пирӗн сывлӑшри çар вӑйӗсем, вӑрçӑн малтанхи тапхӑрӗнче противникӑн йышлӑрах пулнӑ авиацийӗн вӑйӗсене хирӗç кӗрешсе, вӑрçӑ пынӑ вӑхӑтра гитлеровецсен сывлӑшри пӗрремӗш вӑйне тӑма ӗмӗтленнине пӗтерчӗç. Совет авиацийӗ тӑшмана йывӑр çухатусем тӳстерчӗ тата халӗ те тӳстерет, унӑн техникине чӗрӗ вӑйне пӗтере-пӗтере тӑкать.

Çӗршывӑн сывлӑшран тапӑнинчен хӳтӗлекен истребительнӑй авиаци пирӗн хуласене, промышленность центрӗсене тата транспорта противник сывлӑшран килсе тапӑннинчен шанчӑклӑн хӳтӗлесе тӑрать. Нимӗç авиацийӗ совет индустрийӗн районӗсене кӗрсе кайма тата пирӗн фабрикӑсемпе заводсен ӗçне пӑсма хӑтланнисем пурте пӗтӗмпех путланса ларчӗç.

Инçе вӗçсе кайса тапӑнакан совет авиацийӗ противникӑн тылӗсене аркатмаллах пыра-пыра çапать. Совет летчикӗсем Берлин, Кенигсберг, Данциг, Бухарест, Будапешт, Хельсинки хулисем çине, Германи тата унпа пӗр камарлисен промышленность центрӗсем çине, чугун çул узелӗсем çине пӗр хут кӑна мар вӗçсе кайса бомбӑсем пӑрахрӗç.

Мускава паттӑрӑн хӳтӗленӗ кунсенче совет авиацийӗ хамӑр Тӑван çӗршывӑн столицине тӑшман авиацийӗ килсе çапассинчен хӳтӗлес задачӑна ӑнӑçлӑн пурнӑçларӗ. Пирӗн авиаци чаçӗсем тӑшманӑн сывлӑшри вӑйӗсене пӗтерсе тата Мускав патӗнче çӗмӗрсе тӑкма Хӗрлӗ Çар çӗр çинчи чаçӗсене пысӑк пулӑшу пачӗç.

Ленинград, Одесса, Севастополь хулисене хӳтӗленӗ чухне Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс Çар Флочӗн Сывлӑш-Çар Вӑйӗсен летчикӗсем хӑйсен паттӑрлӑхӗпе мухтава тухрӗç. Воронеж патӗнче, Дон çинче, Кавказ патне пымалли вырӑнсенчи çапӑçусенче совет авиацийӗ сывлӑшран пыра-пыра çапса нимӗçсен наступленине чарса тӑчӗ, çапла вара хамӑр çарсене пысӑк пулӑшу пачӗ. Сталинградран çапӑçнӑ чухне пирӗн Сывлӑш-Çар Вӑйӗсен нимӗçсен чи лайӑх эскадрисене летчикӗсене вӗлерсе пӗтерчӗç. Хайран вара Сталинградра хупӑрласа илнӗ нимӗç çарӗсене сывлӑшран пӳлсе тӑрас ӗç çав тери пултаруллӑн пурнӑçа кӗртрӗç. Фашистсен пиншер чи лайӑх летчикӗсем Мускав патӗнче, Ленинград патӗнче, Сталинград районӗнче, Кубаньпе Дон çеçенхирӗсенче, Украинӑпа Белоруссии çинче хирӗçсенче вилсе çухалчӗç.

Пирӗн авиаци вӑрçӑ пынӑ вӑхӑтра çапӑçусенче противникӑн авиацийӗн вӑйӗсене пӗтерсе пычӗ, пирӗн çарсене наступление пулӑшрӗ.

Тӑвань çурутаре çапӑçусенче Курск патӗнчи çапӑçусенче совет авиацийӗ сывлӑшра пуçлӑха тытнӑ.

Пӗтӗм совет халӑхӗ вӑйӗпе пӗлмесӗр хӗрлӗ çарӑн Сывлӑш-Çар Вӑйӗсене тӑвнӑ. Совет тылӗ, рабочисем, специалистсем конструкторсем вӑйӗпе самолетсем ӗçлесе тӑчӗç.

1944 çулхи çулла Хӗрлӗ Çар анлӑ фронтра наступленисем туса пынӑ, çав çапӑçусенче пирӗн авиаци сывлӑшра пуçлӑха тытнӑ.

Отечественнӑй вӑрçӑ пынӑ тапхӑрта совет авиацийӗ сывлӑшри çапӑçусенче тата аэродромсем çинче противникӑн 50 пин ытла самолетне пӗтерчӗ. Çавӑн пекех пирӗн летчиксем 10 пин вагона, 7.000 паровоза, 200 пин автомашинӑна пӗтерчӗç.

Çакӑн пек ӗнтӗ Хӗрлӗ Çарӑн Сывлӑш-Çар Вӑйӗсен Отечественнӑй вӑрçӑн 38 уйӑхӗнчи çапӑçӑвӗсен кӗске итогӗсем.

СОВИНФОРМБЮРО.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци Маршалне А. Е. Голованова çар званийӗ—Авиацин Главнӑй Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци Маршалне Александр Евгеньевич Голованова çар званийӗ—Авиацин Главнӑй Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци генерал-полковникне Г. А. Ворожейкина çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Григорий Алексеевич Ворожейкина çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци генерал-полковникне Н. С. Скрипкӑна çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Николай Семенович Скрипкӑна çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци генерал-полковникне Ф. Н. Фалалеева çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Федор Яковлевич Фалалеева çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци генерал-полковникне С. А. Худякова çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Сергей Александрович Худякова çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Авиаци генерал-полковникне Ф. А. Астахова çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Федор Алексеевич Астахова çар званийӗ—Авиаци Маршалӗ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августӑн 19-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 19-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 19-мӗшӗнче ТАРТУ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем, тӑшманпа çапӑçса, шоссе çулӗсен пахa узелне тата чугун çул станцине АЛУКСНЭ хулине туртса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — МЫНИСТЭ, ТУНДО, СКУЛТАНЫ, СТАМЕРИ, СЛЮКУМС, КОРУЛИ ятлӑ пысӑк ялсем.

ХӖВЕЛАНӐÇ ДВИНА шывӗ çинчи КРУСТПИЛС хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтере-çӗнтере, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ДАУКСТЫ, БРЕНЩЕНИ, ЗИЛЫНИ, БИНДЕНЫ, БЕРЗАУНЭ, ВЕЦКАЛСНАВА, БУНЧУКИ, ВИЛКАИ, ЯУНКАЛСНАВА ятлӑ пысӑк ялсем тата КАЛСНАВА, ЯУНКАЛСНАВА ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен çурçӗртерехре, хӗвеланӑçнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене ӑнӑçлӑн сире-сире янӑ, нимӗçсене çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк çухату кӳнӗ.

БЕЛОСТОК хулинчен хӗвеланӑçнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем, тӑшманпа çапӑçса, малалла кайнӑ, халӑх пурӑнакан 80 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ФАЛЬКИ, НАДБЕЛЬНЕ, КОЛОМЫЯ, ЧАХЫ-КОЛАКИ, СВЕРЧЕВО, ЗАЛЕСЬЕ, ЧИЖЕВ, СМОЛЕВО ятлӑ пысӑк ялсем тата АРНОВО-УНДЫ, КОЛАКИ, ЧИЖЕВ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

ПРАГАРАН хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

САНДОМИР хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ӑнӑçлӑ çапӑçнӑ, çавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, КАМОРНА, ПЕНЧИНЫ, ТУЛКОВИЦЕ, ВИЛЬЧИЦЕ, ГАЛКОВИЦЕ, ГЕРЛЯХУВ, КАМЕНЬ ятлӑ ялсене туртса илнӗ. Çак ӑнпа пӗр вӑхӑтрах пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине çурçӗр енчен пырса пулӑшма хӑтланакан тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ. Çак çапӑçусенче тӑшмана çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк çухату кӳнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Августӑн 18-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 203 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 48 самолетне персе ӳкернӗ.

АВГУСТӐН 20-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 20-мӗшӗнче пирӗн çарсем ТАРТУ хулинчен хӗвелтухӑçнерехре тата кӑнтӑртарахра çаплах наступлени туса пынӑ, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ПЕДАСПЯЕ, КЫРВЕСИЛЛА, ВЫННУ, ХАММАСТЕ, РЕБАЗЕ, ВАНЭ-КУСТЕ (ТАРТУ хулинчен 12 километр кӑнтӑртарахра), ВИСИ, МАРИТСА, САВЕРНА, КАГВЕРЕ, МУТЕМЕТСА, РУШКИ, БЕТАРИ, АКТАНИ, ЛАУТИ ятлӑ пысӑк ялсем тата РЕБАЗЕ, АЛСВИКИ ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

РИГА хулинчен хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем çаплах ӑнӑçлӑ наступлени туса пынӑ, тӑшманпа çапӑçса, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — КЛЭИНИ, ИОЗУМИ, ВЕСТЫЭНА, ТОЛКА, ЭРГЛИ, ИНДРАНЫ, АПСАЛАС, МЕЛГАВА, МӐЛАКАЛНС, ОЗОЛ-САЛА ятлӑ пысӑк ялсем тата ЭРГЛИ, СПИГНА ятлӑ чугун çул станцийӗсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хӗвеланӑçнерехре тата çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ. Вӑйлӑ çапӑçнӑ хыççӑн пирӗн чаçсем халӑх пурӑнакан темиçе пункта хӑварнӑ.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ, нимӗçсене çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк çухату кӳнӗ.

ПРАГАРАН хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пур атакисене те сирсе янӑ, чылай участоксенче хӑйсем ӑнӑçлӑ контратакӑсем тунӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ тата халӑх пурӑнакан темиçе пункта тытса илнӗ.

САНДОМИР хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн çавӑрса илнӗ группировкине пӗтерсе тӑкнӑ, МОКОШИН, ЖЕЧИЦА, СУХАЖУВ, ВХАЛКИ, ВЫСЯДЛУВ, РАДОШКИ, ЗАГРОДЫ, ОЦИНЕК ятлӑ ялсене йышӑннӑ. Парӑнма килӗшмен пирки тӑшманӑн çавӑрса илнӗ çарӗсен пысӑк пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ.

Августӑн 19-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 250 танкне çӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 31 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Тарту хулинчен хӗвелтухӑçнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр чаçри подразделенисем, тӑшман хытӑ хирӗç тӑнине çӗмӗрсе тӑкса, çулсен узелне — Вынну местечкине штурмласа туртса илнӗ. Вынну вӑл нимӗçсен Тарту хулине пырса кӗмелли çулсем çинчи тӗреклетнӗ пункчӗ пулнӑ. Пирӗн тепӗр часть вӑрмансенче тӑшмана çавӑрса илмелли маневр тунӑ та нимӗçсене Тарту хулинчен 12 километрталаракан Вана-Кусте ялӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. 400 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ. Казарин старшина ертсе пыракан 12 красноармеец нимӗçсен миномет батарейине атакӑланӑ. Паттӑр совет боецӗсем гитлеровецсене вӗлерсе пӗтернӗ те ултӑ кӗпçеллӗ 4 миномета тытса илнӗ.

* * *

Рига хулинчен хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем хаяр çапӑçусенче нимӗçсен икӗ пехотнӑй дивизийӗн чаçӗсене аркатса тӑкнӑ. Çитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн çарсем 25 километр малалла кайнӑ та Эргли ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктпа чугун çул станцине туртса илнӗ. Эргли станцийӗнче Ригӑран халь çеç пырса çитнӗ пассажирски поезда, темиçе чугун çул эшелонне тата тӗрлӗ çар пурлӑхӗн темиçе складне тытса илнӗ. Нимӗçсем темиçе хутчен те хаяр контратакӑсем тунӑ, анчах та вӗсене артиллерирен тата пулеметсемпе персе сапаласа янӑ. Совет чаçӗсем 500 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. 50 тупӑ, ывӑтмалли 36 аппарат тата ытти трофейсем те нумай тытса илнӗ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хӗвеланӑçнерехре тата çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн çарсем тӑшманӑн йышлӑ пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ. Пӗр участокра нимӗçсен 70 танкӗ, вӑрманпа пырса, пирӗн çулсем çине тухма хӑтланнӑ. Совет çарӗсем тӑшманӑн ку ӗçне путлантарса лартнӑ. Çапӑçу хирӗнче нимӗçсен персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ 50 танкӗ тӑрса юлнӑ. Ытти танкӗсем васкасах каялла тарнӑ. Тепӗр участокра пӗр соединени чаçӗсем гитлеровецсен çирӗм атакине ытла сирсе янӑ. Хӑйӗн çыннисене темӗн чухлех пӗтерсе çапӑçса, тӑшман пирӗн чаççене хӗстернӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, 2.000 нимӗç салтакӗпе офицерне çити вӗлерсе пӗтернӗ, 35 тупӑ тата 145 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 94 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине çунтарса янӑ е персе çӗмӗрнӗ.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хӗвеланӑçнерехре тӑшман хӑйӗн лӳчӗркесе пӗтернӗ чаçӗсене çӗнӗ вӑйсем парса пулӑшнӑ хыççӑн каллех атакӑсем тума тытӑннӑ. Пӗр участокра хытӑ çапӑçнӑ хыççӑн нимӗçсем пирӗн малти чаçсем тӑракан вырӑна сапӑлланса кӗнӗ. Пырса çитнӗ совет танкисчӗсем тӑшмана хирӗç контратака пуçласа янӑ, нимӗçсен 18 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Вара пехотинецсемпе пӗрле гитлеровецсене малтанхи позицисем çине хӑваласа янӑ. Тепӗр участокра пирӗн хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсен подразделенийӗ, нимӗçсен атакисене сире-сире ярса, «тигр» йышши 2 танка тата 5 вӑтам танка пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Висла шывӗн сылтӑм енче Варшава хулипе юнашар ларакан Прагӑран хӗвелтухӑçнерехре тата çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре çаплах хаяр çапӑçусем пынӑ. Атака пуçласа янӑ эсэсовецсен чаçӗсене хирӗç пирӗн çарсем хӑйсем пырса çапнӑ та эсэсовецсене халӑх пурӑнакан темиçе пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Çак пунктсене каллех каялла туртса илме хӑтланса, нимӗçсем çирӗм хут ытла атака тунӑ, анчах та вӗсен атакисем ӑнӑçман. Пирӗннисем 900 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ тата 23 танк пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн чаçсем 14 танк, 8 тупӑ тата 21 пулемет тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Çурçӗрти флотӑн авиацийӗ Çурçӗр Норвегири Киркенес портне йышлӑн вӗçсе кайса тапӑннӑ. Зенитнӑй артиллери вучӗн чаршавӗ урлӑ вӗçсе тухса, пирӗн летчиксем çав портпа унта тӑракан карапсене бомбӑсем пӑрахса вӑйлӑ штурмланӑ. Тӑшманӑн 3.000 тонна таякан транспорчӗпе хуралта çӳрекен икӗ катерне шыва путарнӑ. Икӗ пысӑк транспорта чылаях вӑйлӑ сиенленӗ. Порт территорийӗнче пушарсем тухнӑ, пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ. Сывлӑшри çапӑçура нимӗçсен 9 истребительне персе ӳкернӗ.

Çурçӗрти флотӑн сывлӑшри разведки тӑшман суднисен караванне курнӑ. Çӗрле пирӗн катерсем тӑшман суднисене хӑваласа çитсе торпедӑсем янӑ. Малтанлӑха панӑ даннӑйсем тӑрӑх, тӑшманӑн темиçе карапне шыва путарнӑ.

СССР Совнаркомӗнче

Йывӑр çын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство енчен пулӑшмалли тата çӑмӑллӑхсем памалли йӗрке çинчен

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йывӑр çын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство енчен пулӑшмалли тата çӑмӑллӑхсем памалли йӗрке çинчен калакан **Положение** пӑхса тухса çирӗплетнӗ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн «Йывӑр çын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство енчен пулӑшассине ӳстерессi, ача амӑшӗсен тата ачасен пурнӑçне сыхлас ӗçе вӑйлатасси çинчен, «Ача амӑшӗ — героиня» тесе хисеплӗ ят тӑвасси, «Ача амӑшӗн мухтавӗ» ятлӑ орден тата «Ача амӑшӗн медалӗ» ятлӑ медаль тӑвасси çинчен» 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указӗ тӑрӑх, йывӑр çын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство енчен пулӑшас тата çӑмӑллӑхсем парас тӗлӗшпе çакӑн пек йӗрке тунӑ:

I.

НУМАЙ АЧАЛЛА ХӖРАРАМСЕНЕ ГОСУДАРСТВО ПОСОБИЙӖ МӖН ЧУХЛӖ ПАРАССИНЕ ПАЛАРТМАЛЛИ ЙӖРКЕ

1. Государство пособине нумай ачаллӑ амӑшӗсене (упӑшкаллисене тата тӑлӑх пурӑнаканнисене), вӗсен икӗ ача пур пулсан, виççӗмӗш ача тата ун хыççӑнхи ытти ачасем çуралнӑ чухне, вӗсем 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗ хыççӑн çуралнӑ пулсан, памалла тӑваççӗ тата çав пособие тӳлеççӗ.

2. Указӑн 2-мӗш статьи тӑрӑх, нумай ачаллӑ амӑшӗсене государство пособине çакӑн пек йӗркепе тата çакӑн чухлӗ тӳлесе пыраççӗ:

	Пӗр вӑхӑтлӑха	Кашни уйӑхрах
Икӗ ача усракан амӑшӗсене виççӗмӗш ача çуралсан	400 тенкӗ	—
Виçӗ ача усракан амӑшӗсене тӑваттӑмӗш ача çуралсан	1.300 тенкӗ	80 тенкӗ
Тӑватӑ ача усракан амӑшӗсене пилӗкмӗш ача çуралсан	1.700 тенкӗ	120 тенкӗ
Пилӗк ача усракан амӑшӗсене улттӑмӗш ача çуралсан	2.000 тенкӗ	140 тенкӗ
Ултӑ ача усракан амӑшӗсене çиччӗмӗш ача çуралсан	2.500 тенкӗ	200 тенкӗ
Çичӗ ача усракан амӑшӗсене саккӑрмӗш ача çуралсан	2.500 тенкӗ	200 тенкӗ
Сакӑр ача усракан амӑшӗсене тӑххӑрмӗш ача çуралсан	3.500 тенкӗ	250 тенкӗ
Тӑхӑр ача усракан амӑшӗсене вуннӑмӗш ача çуралсан	3.500 тенкӗ	250 тенкӗ
Вунӑ ача усракан амӑшӗсене ун хыççӑнхи кашни ача çуралнӑ чухне	5.000 тенкӗ	300 тенкӗ

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене кашни уйӑхрах паракан пособие ача çуралнӑ хыççӑн иккӗмӗш çулӗнче тӳлеме пуçлаççӗ те ача пилӗк çул тултариччен тӳлесе тӑраççӗ.

Государство пособине илсе тӑракан нумай ачаллӑ амӑшӗ, вӑл тепӗр ача çуратать пулсан, çав ачашӑн вӑл пӗр вӑхӑтлӑха тӳлекен тата кашни уйӑхрах тӳлесе тӑракан пособие илет, унтан маларах çуралнӑ ачашӑн та вара вӑл çав ача 5 çула çитиччен пособи малалла илсе тӑрать.

3. Указ кӑларнӑ кун тӗлне виçӗ, тӑватӑ ача, пилӗк е ултӑ ача усракан амӑшӗсене Указӑн иккӗмӗш статьи тӑрӑх пӑхнӑ пӗр вӑхӑтлӑха памалли тата кашни уйӑхрах парса тӑмалли государство пособине Указ кӑларнӑ хыççӑн çуралнӑ кашни ачашӑн тӳлесе тӑраççӗ.

Указ кӑларнӑ кун тӗлне çичӗ ача е унтан та ытларах усракан амӑшӗсем нумай ачаллӑ пулнишӗн СССР Тӗпӗçтӑвкомӗпе Совнаркомӗ 1936 çулхи июнӗн 27-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленире кӑтартнӑ йӗркепе тата унта кӑтартнӑ чухлӗ пособи илме пултараççӗ, вӗсене çакӑн чухлӗ тӳлеççӗ: çиччӗмӗш, саккӑрмӗш, тӑххӑрмӗш тата вуннӑмӗш ачасемшӗн — ача çуралнӑ хыççӑн пилӗк çул хушши кашни çулах 2.000-шер тенкӗ; вунпӗрмӗш тата ун хыççӑнхи кашни ачашӑн — пӗр вӑхӑтлӑха 5.000 тенкӗ тата ача çуралнӑ хыççӑн иккӗмӗш çултан пуçласа тӑватӑ çул хушши кашни çулах 3.000-шер тенкӗ; 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указа кӑларнӑ хыççӑн çуралакан ытти кашни ачашӑн вара ӑна пособи çав указӑн 2-мӗш статьинче палӑртнӑ йӗркепе тата унта кӑтартнӑ чухлӗ тӳлеççӗ.

4. Нумай ачаллӑ амӑшне государство пособине памалла тунӑ чухне амӑшӗн пӗр ашшӗпе е тӗрлӗ ашшӗсемпе пулнӑ пур ачисене те, ачисем миçе çултине пӑхмасӑр, амӑшӗпе пӗрле пурӑнаканнисене те, унтан уйрӑм пурӑнаканнисене те, çавӑн пекех тата Отечественнӑй вӑрçӑ фрончӗсенче вилнисене е пӗр хыпарсӑр çухалнисене те, шута илеççӗ.

Нумай ачаллӑ амӑшӗсене государство пособине памалла тунӑ чухне усрава илнӗ ачасене, çавӑн пекех тата упӑшкин малтанхи арӑмӗпе пулнӑ ачисене те, вӗсем амӑшӗ патне 12 çултан аслӑ мар чухне куçнӑ пулсан, шута илеççӗ.

Нумай ачаллӑ амӑшне государство пособине памалла тунӑ чухне унӑн вилнӗ ачисене, çавӑн пекех тата ют çӗршывсене куçса кайса çав çӗршыв çыннисем пулса тӑнӑ ачисене, шута илмеççӗ.

5. Нумай ачаллӑ амӑшӗ вилес пулсан, государство пособине ачасен ашшӗне е ачасене пӑхакан çынна, вилнӗ амӑшӗн ачисем вӗсен аллине юлаççӗ пулсан, тӳлесе тӑраççӗ.

6. Нумай ачаллӑ амӑшӗ ача çуралсан çулталӑк е ытларах вӑхӑт иртнӗ хыççӑн хӑйне государство пособийӗ памалла тума пырса ыйтсан, ӑна пӗр вӑхӑтлӑх государство пособине тата кашни уйӑхрах тӳлекен пособие иртнӗ вӑхӑтшӑн та тӳлеççӗ, анчах пособи ыйтма пынӑ кунчченхи ултӑ уйӑхран ытла мар вӑхӑтшӑн кӑна тӳлеççӗ.

Нумай ачаллӑ амӑшӗ çулталӑк е ытларах вӑхӑт иртнӗ хыççӑн хӑйне государство пособийӗ (пӗр вӑхӑтлӑха е кашни уйӑхрах тӳлесе тӑмалли пособи) памалла тума пырса ыйтсан, ӑна пӗр вӑхӑтлӑх паракан пособие пӗтӗмӗшпех тӳлеççӗ, кашни уйӑхра тӳлемелли пособие иртнӗ вӑхӑтшӑн вара черетлӗ пособи тӳлемелли срокӑн кунӗ çитиччӗнхи ултӑ уйӑхшӑн кӑна тӳлеççӗ.

Ӗççынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, нумай ачаллӑ амӑшне кашни уйӑхра парса тӑракан государство пособине иртнӗ вӑхӑтшӑн хӑшпӗр чухне ултӑ уйӑхран ытларах срокшӑн та тӳлеме пултараççӗ.

7. Нумай ачаллӑ амӑшне государство пособине çакӑн пек чухне тӳлеме пӑрахаççӗ:

а) пособи памалла тунӑ ача вилет пулсан,

б) нумай ачаллӑ амӑшӗн пӗр-пӗр ачи вилет пулсан, çавна пула, чӗрӗ юлнӑ ачасен хисепӗ виççӗрен чакать пулсан.

8. Пилӗк е унтан ытларах ача усракан нумай ачаллӑ амӑшӗн пӗр-пӗр ачи вилет пулсан, кашни уйӑхра тӳлекен пособи хисепӗ чакать, çемьере улшӑнусем пулса иртнӗ хыççӑнхи уйӑхран пуçласа вара пособие çемьере мӗн чухлӗ ача юлнине кура тӳлеççӗ.

Пособи тӳлемелли хисепе кун пек чухне ӗççынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх улӑштараççӗ.

Нумай ачаллӑ амӑшӗн пӗр-пӗр ачи отечественнӑй вӑрçӑ фрончӗсенче вилнӗ е пӗр хыпарсӑр çухалнӑ пулсан, нумай ачасемшӗн тӳлекен государство пособин хисепӗ пӗчӗкленмест.

II.

ТӐЛАХ ПУРӐНАКАН АМӐШЕСЕНЕ ГОСУДАРСТВО ПОСОБИЙӖ МӖН ЧУХЛӖ ПАРАССИНЕ ПАЛАРТМАЛЛИ ЙӖРКЕ

9. Тӑлӑх пурӑнакан (качча кайман) амӑшӗсене 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗ хыççӑн çуралнӑ ачасене пӑхса усрама тата вӗрентсе ӳстерме государство пособийӗ параççӗ.

10. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене ачасене пӑхса усрама тата вӗрентсе ӳстерме государство пособине çакӑн чухлӗ параççӗ:

пӗр ача валли—уйӑхра 100 тенкӗ,
икӗ ача валли—уйӑхра 150 тенкӗ,
виçӗ ача е унтан ытларах ачасем валли—уйӑхра 200 тенкӗ.

Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство пособине вӗсен ачисем 12 çул тултариччен тӳлесе тӑраççӗ.

11. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗн ачисем валли, 1944 çулхи январӗн 1-мӗшӗпе июлӗн 8-мӗшӗ хушшинче çуралнӑскерсем валли, Указӑн 3-мӗш статьи тӑрӑх, кашни уйӑхра парса тӑракан государство пособине, çав ачасен амӑшӗ вӗсемшӗн алимент илсе тӑмасть пулсан кӑна, памалла тӑваççӗ.

12. Качча кайса çырӑннӑ хӗрарӑм, унӑн упӑшки вилес пулсан, упӑшки вилнӗ хыççӑн çуралнӑ ачисемшӗн государство пособийӗ, тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсем валли тунӑ йӗрке тӑрӑх, илме пултарать.

13. Çырӑнмасӑр, анчах пӗрле пурӑнакан, пӗр хуçалӑх тытса тӑракан тата ачана пӗрле пӑхса çитӗнтерекен çынпа тунӑ ачашӑн амӑшӗ тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ валли тунӑ пособие илме пултараймасть.

14. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене, вӗсен виçӗ ача е унтан та ытларах пулсан, Указӑн 3-мӗш статьинче палӑртнӑ государство пособине нумай ачаллӑ пулнӑ пирки илсе тӑракан пособи çумне, Указӑн 2-мӗш статьинче кӑтартнӑ тӑрӑх тӳлесе тӑракан пособи çумне, хушса тӳлеççӗ.

15. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ качча каять пулсан, ӑна унччен тӳлесе тӑнӑ государство пособине малалла тӳлесе тӑма чарӑнмаççӗ.

16. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗн ачине ачасен учрежденийӗсенче пӗтӗмӗшпех государство шучӗпе пӑхса усранӑ тата вӗрентнӗ вӑхӑтра, çав ача амӑшне кашни уйӑхра парса тӑракан пособие тӳлемеççӗ. Çав ача амӑшӗн килӗнче ытти ачисем пулсан, унӑн 12 çултан кӗçӗнрех ачисем, 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗ хыççӑн çуралнӑскерсем, мӗн чухлӗ пуррине кура е 1944 çулхи январӗн 1-мӗшӗпе июлӗн 8-мӗшӗ хушшинче çуралнӑскерсем мӗн чухлӗ пуррине кура тата амӑшӗ вӗсемшӗн алимент илмест пулсан, ӑна пособи тӳлеççӗ.

17. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗн пӗр-пӗр ачи вилет пулсан, ӑна кашни уйӑхра паракан государство пособине унӑн 12 çултан кӗçӗнрех ачисем, 1944 çулхи июлӗн 8-мӗшӗ хыççӑн çуралнӑскерсем, мӗн чухлӗ пуррине кура е 1944 çулхи январӗн 1-мӗшӗпе июлӗн 8-мӗшӗ хушшинче çуралнӑскерсем мӗн чухлӗ пуррине кура тата амӑшӗ вӗсемшӗн алимент илмест пулсан тӳлеççӗ.

18. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ вилес пулсан, ӑна паракан государство пособине тивӗçлӗ йӗрке тӑрӑх ачасене пӑхса çитӗнтерме уйӑрнӑ çынна параççӗ.

(Юлашки 2 мӗш страницӑра).

СССР Совнаркомӗнче

Йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство енчен пулӑшмалли тата ҫӑмӑллӑхсем памалли йӗрке ҫинчен

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

III.

НУМАЙ АЧАЛЛА ТАТА ТАЛАХ ПУРАНАКАН АМАШЕСЕНЕ ГОСУДАРСТВО ПОСОБИЙЕ ПАМАЛЛА ТАВАС ЙЕРКЕ

19. Нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство пособийӗ ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗсен исполнительнӑй комитечӗсем йышӑннӑ тӑрӑх памалла тӑваҫҫӗ.

Государство пособийӗ пама ыйтса ҫыракан заявление ача амӑшӗ хӑй пурӑннӑ вырӑнта ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитетне ҫырупа ҫырса хӑй кайса парать е хӑй шаннӑ ҫын урлӑ, е тата почта, ялсовечӗ, фабрикӑпа заводри тата вырӑнти комитетсем урлӑ, домоуправлени урлӑ ярса пама пултарать.

Заявленире ача амӑшӗн хӑйӗн мӗнпур ачисен ячӗсене, ашшӗ ячӗсемпе хушамачӗсене тата вӗсем ӑҫта пурӑннине тӗрӗс кӑтартса памалла.

20. Государство пособийӗ пама ыйтса ҫыракан заявлени ҫумӗнче ҫакӑн пек хутсем пулмалла:

а) пособи пама ыйтакан ача хӑҫан ҫуралнине кӑтартакан свидетельство е ҫав свидетельствӑн копийӗ (свидетельствӑн копине нотариальнӑй конторӑсенче е ялсовечӗсенче ҫирӗплеттермелле);

б) ялсовет исполкомӗн решенийӗнчен илнӗ выписка, хуласенче вара—милици органӗ панӑ справка, ҫав справкӑра амӑшӗн миҫе ача пуррине, ҫав ачасем миҫе ҫултине кӑтартса памалла;

в) амӑшӗсенчен уйрӑм пурӑнакан ачасем валли — ҫав ачасем пурӑнакан вырӑнти милици органӗсенчен е ҫар чаҫӗнчен панӑ справка пулмалла.

Справкӑсем, заявлени панӑ кунран шутласа,ултӑ уйӑхран кивӗреххисем пулмалла мар.

21. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче нумай ачаллӑ амӑшӗ Хӗрлӗ Ҫара илнӗ ачисемшӗн хӑйӗн ачисене ҫара илнӗ вырӑнта районри ҫар комиссариачӗ панӑ справкӑна тӑратма пултарать.

[illegible]

22. [illegible]

заявление пӑхса тухма тата государство пособине памалла тума тивӗҫлӗ, ҫавӑн хыҫҫӑн вара нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство пособийӗсем парас тӗлӗшпе ӗҫлекен районри, хулари отдела ҫав пособие тӳлесе тӑма хушмалла.

23. Ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗ государство пособийӗ памалла тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ решение протокола ҫыраҫҫӗ, ҫав протокола исполнительнӑй комитетӑн председателӗпе секретарӗ алӑ пусаҫҫӗ тата пичет пусса ҫирӗплетеҫҫӗ.

Протоколра государство пособине памалла тума май панӑ мӗнпур документсене ҫырса кӑтартмалла е пособие мӗншӗн памалла мар тунине кӑтартса хӑвармалла.

Ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗн государство пособийӗ памалла тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ решенийӗнчен илнӗ выпискӑна ача амӑшӗн аллине параҫҫӗ; выпискӑн иккӗмӗш экземплярне, ача амӑшӗн заявленине тата пособи памалла тума май панӑ мӗнпур документсене сыхласа усрама нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗсене государство пособийӗсем парас тӗлӗшпе ӗҫлекен районри, хулари отделсене яраҫҫӗ.

24. Ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗ йышӑннӑ решенипе килӗшмесен, нумай ачаллӑ тата тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗ йышӑннӑ решени пирки ӗҫҫынни депутачӗсен область, край совечӗн исполнительнӑй комитетне, автономиллӗ, союзлӑ республикӑн Халӑх Комиссарӗсен Советне жалоба пама пултарать, ҫав жалобӑна вӗсен икӗ эрнелӗх срокран кая юлмасӑр пӑхса тухмалла.

25. Нумай ачаллӑ амӑшӗ е тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ урӑх вырӑна куҫса каять пул- [illegible]

IV.

ГОСУДАРСТВО ПОСОБИЙӖСЕМ ТӲЛЕСЕ ТӐМАЛЛИ ЙӖРКЕ

26.–31. [illegible]

V.

ЙЫВӐР ҪЫН ПУЛНА ХЕРАРАМСЕНЕ ТАТА АЧА АМАШЕСЕНЕ ҪАМАЛЛАХСЕМ ПАМАЛЛИ ЙЕРКЕ

32.–33. [illegible] параҫҫӗ.

34. Предприятисемпе учрежденисен руководителӗсем йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене йывӑр ҫын пулнӑ тата ача ҫуратнӑ пирки паракан отпускпа пӗр вӑхӑтра черетлӗ отпуск та пама тивӗҫлӗ.

35. Йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑма — работницӑна е хӗрарӑм-служащине, вӑл йывӑр ҫын пулнӑранпа 4 уйӑх иртнӗ хыҫҫӑн, ӗҫ вӑхӑчӗ хыҫҫӑн хушса ӗҫлеттермеҫҫӗ.

36. Кӑкӑр ачине пӑхса усракан хӗрарӑма-работницӑна, хӗрарӑм-служащие вӗсем ачине кӑкӑр ҫӗчӗ усранӑ вӑхӑтра ҫӗрлехи ӗҫсене ӗҫлеттермеҫҫӗ.

37. Йывӑр ҫын пулнӑ кашни хӗрарӑма, [illegible]

[illegible] Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указӗн 8-мӗш статьи тӑрӑх хушса памалли кашни уйӑхри паека ятарласа тунӑ талонсем тӑрӑх параҫҫӗ; ҫав талонсене районсенчи, хуласенчи суту-илӳ енӗпе ӗҫлекен отделсем карточнӑй бюро урлӑ, лечебнӑй учреждениесен (хӗрарӑм консультацийӗсен, ачасен консультацийӗсен) справкисем тӑрӑх параҫҫӗ.

40. СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указӗн 9-мӗш статьи тӑрӑх, предприятисемпе учреждениесен руководителӗсен йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсем тата кӑкӑр ачисен амӑшӗсем валли подсобнӑй хуҫалӑхсенчен апат-ҫимӗҫ фончӗ уйӑрмалла тата, профсоюз организацийӗсемпе пӗрле, йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсемпе кӑкӑр ачисен амӑшӗсене продуктсем хушса памалли нормӑсене ҫирӗплетмелле.

Йывӑр ҫын пулнӑ хӗрарӑмсене тата кӑкӑр ачисен амӑшӗсене апат-ҫимӗҫсем лечебнӑй учреждениесен справкисем тӑрӑх хушса параҫҫӗ, ҫав справкӑсенче хӗрарӑм йывӑр ҫын пулнин срокне е кӑкӑр ачи миҫе уйӑхрине кӑтартмалла.

41. Ача ҫуралсан, тара кӗрӗшсе ӗҫлекен е промысла кооперацийӗн членӗ пулса тӑракан амӑшне е ашшӗне государствӑн социальнӑй страховани укҫинчен е кооперации артелӗсенчи пулӑшу кассисенчен тин ҫуралнӑ ача валли кӗпе-йӗм туянма, 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указ тухиччен парса тӑнӑ 45 тенкӗ вырӑнне, 120 тенкӗ параҫҫӗ тата ачине тӑрантарма 90 тенкӗ пособи параҫҫӗ.

Ҫавӑн пек пособи, ача амӑшӗ е ашшӗ ҫав предприятире, учрежденире е артельте виҫӗ уйӑхран кая мар ӗҫленӗ пулсан тата пособи пама ыйтнӑ ашшӗ-амӑшӗн уйӑхри ӗҫукҫи 400 тенкӗрен иртмест пулсан, параҫҫӗ.

Икӗ ача е ытларах ҫуралсан, пӗр вӑхӑтра паракан пособие ҫӳлерехре кӑтартнӑ хисеппе кашни ача валли параҫҫӗ.

Пособие, ача ашшӗ-амӑшӗ ача ҫурални ҫинчен калакан свидетельствӑна тата вӗсем ӗҫлекен вырӑнтан вӗсен ӗҫукҫи мӗн чухлине кӑтартса панӑ справкӑна тӑратсан, параҫҫӗ.

42. Суту-илӳ организацийӗсем социальнӑй страховани укҫи-тенкинчен е кооперации артелӗсенчи пулӑшу кассисенчен пӗр вӑхӑтлӑх пособи илекен ача амӑшӗсене сутма тин ҫуралнӑ ача валли кирлӗ кӗпе-йӗм комплекчӗ уйӑрма тивӗҫлӗ.

Икӗ е ытларах ача ҫуралнӑ пулсан, кӗпе-йӗм комплектне кашни ҫуралнӑ ача валли параҫҫӗ.

Тин ҫуралнӑ ачасем валли уйӑрнӑ кӗпе-йӗм комплектне промтоварнӑй карточкӑсемсӗрех, анчах районри, хулари суту-илӳ енӗпе ӗҫлекен отделсем карточнӑй бюросем урлӑ панӑ ордерсем тӑрӑх параҫҫӗ, ҫав ордерсене вара лечебнӑй учреждениесен (хӗрарӑм консультацийӗн, ачасен консультацийӗн) справкисем тӑрӑх ҫырса параҫҫӗ.

Тин ҫуралнӑ ачасем валли паракан кӗпе-йӗм комплектне, промтоварнӑй карточкӑсемсӗр паракансене, хулара е рабочи поселокра пурӑнакан ача амӑшӗ те, вӑл ҫак Положенин 41-мӗш статьинче кӑтартнӑ пособие илмест пулсан та, туянма пултарать.

Яллӑ вырӑнсенче пурӑнакан ача амӑшӗсене суту-илӳ организацийӗсем, лечебнӑй учреждениесен (хӗрарӑм консультацийӗн, ачасен консультацийӗн, амбулаторин, ялти врач участокӗн) справкисем тӑрӑх, кашни тин ҫуралнӑ ача валли 10 метртан кая мар мануфактура сутма тивӗҫ.

43. Ачасене ача сачӗсемпе яслисенче усранӑшӑн ҫакӑн пек ашшӗ-амӑшӗсем 50 процент кӑна тӳлеҫҫӗ:

виҫӗ ача усракан ашшӗ-амӑшӗсем уйӑхра ӗҫукҫи 400 тенкӗ таран илеҫҫӗ пулсан;

тӑватӑ ача усракан ашшӗ-амӑшӗсем уйӑхра ӗҫукҫи 600 тенкӗ таран илеҫҫӗ пулсан;

пилӗк е ытларах та ача усракан ашшӗ-амӑшӗсем, вӗсем ӗҫукҫи мӗн чухлӗ илнине пӑхмасӑрах, ачисене ача сачӗсемпе яслисенче усранӑшӑн 50 процент кӑна тӳлеҫҫӗ.

Ҫав ҫӑмӑллӑхсене илес тесен, ашшӗ-амӑшӗсем хӑйсем ӗҫленӗ вырӑнтан мӗн чухлӗ ӗҫукҫи илни ҫинчен калакан справка тата домоуправленирен е ялсоветӑн исполнительнӑй комитетӗнчен ачасен йышӗ ҫинчен калакан справка тӑратаҫҫӗ.

44. Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ, СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи июлӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ Указӗн 4-мӗш статьи тӑрӑх, хӑй кӑмӑлланине кура, хӑй ҫуратнӑ ачана пӑхса тата, вӗрентсе ӳстермешкӗн ача учрежденине (ача ҫуртне) вырнаҫтарма пултарать, ача учрежденийӗ вара ҫав ачана пӗтӗмӗшпех государство шучӗпе пӑхса усрать, вӗрентсе ҫитӗнтерет.

Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ хӑйӗн ачине хӑй пӑхса ӳстермешкӗн ача учрежденийӗнчен каялла илме пултарать.

Ачине ача учрежденине вырнаҫтарма кӑмӑллакан ача амӑшӗ ҫавӑн ҫинчен ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитетне заявлени парать, исполнительнӑй комитет вара ҫав ачана пӑхса тата вӗрентсе ӳстермешкӗн ача учрежденине йышӑнма распоряжени парать.

Хӑй ачине ача учрежденине вырнаҫтарнӑ чухне, амӑшӗ ача учрежденин заведующине хӑйӗн пособи илсе тӑмалли кӗнекине кӑтартма тивӗҫлӗ, ҫав кӗнекере вара ача учрежденийӗн заведующийӗ ачана ҫав учреждение йышӑннӑ куна паллӑ тӑвать. Ҫавӑн пекех, тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗ хӑйӗн ачине ача учрежденийӗнчен каялла илет пулсан, ача учрежденийӗн заведующийӗ ача амӑшӗн кӗнекинче ачана ҫав учрежденирен каялла тавӑрса панӑ куна паллӑ тӑвать.

Тӑлӑх пурӑнакан амӑшӗн ача учрежденийӗнче пурӑнакан ачисӗр пуҫне килте урӑх ачасем те пур пулсан, ӗҫҫынни депутачӗсен район, хула совечӗн исполнительнӑй комитечӗ амӑшне паракан пособи тӗлӗшпе унӑн аллинче мӗн чухлӗ ача юлнине кура, улшӑнусем тӑвасси ҫинчен решени йышӑнать.

Литва хулисем валли—куҫса ҫӳрекен электростанцисем

МУСКАВ. СССР Электростанцисен Халӑх Комиссарӗ Жимерин юлташ Литва ССР-не куҫса ҫӳрекен икӗ электростанци (электропоезд) яма хушнӑ. Ҫав электростанцисем Литван гитлерла оккупантсенчен ирӗке кӑларнӑ хулисене чи кирлӗ ӗҫсене тума электричество энергийӗ парӗҫ.

1.000 киловатлӑ пӗр энергопоезда Красногорски ФЭЦ-ра (Урал) пухса ҫитереҫҫӗ. Ҫав поезда Вильнюс хули валли тӑваҫҫӗ. 1.500 киловатлӑ тепӗр поезда Каунас хулине яраҫҫӗ. (ТАСС).

Хӗрлӗ ялав ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарать

Августӑн 19-мӗшӗнче Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозра Вӑрнар районне Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пачӗҫ. Ялав панӑ ятпа пухнӑ чаплӑ пухӑва ялхуҫалӑх ӗҫӗнче малта пыракансем—стахановецсем, бригадирсем, трактористсем, агрономсем тата колхоз руководителӗсем пухӑннӑ.

Чаплӑ пухӑва ВКП(б) Вӑрнар райкомӗн секретарӗ **Коротков** юлташ уҫрӗ.

Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ **Н. Г. Малов** юлташ ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансене саламласа сывлӑх сунчӗ. Райсовет исполкомӗн председателӗ **Осипов** юлташ, куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялава Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗнчен Малов юлташ аллинчен илсе, ҫак чаплӑ ялава хӑйсен аллинчех тытса хӑварассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме пулчӗ.

— Пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем,—тет Осипов юлташ,—кӑҫал та ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн, ӑнса пулнӑ тырпула вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Эпир Хӗрлӗ Ҫара тырпул, аш-какай ҫителӗклӗ парса тӑма сӑмах паратпӑр,—тет Осипов юлташ. Пухури ҫынсем тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ.

«Самолет» колхоз председателӗ **Петров** юлташ сӑмах илет.

— Пирӗн паян пысӑк уяв. Правительство пире, пирӗн ӗҫе хисеплесе, пысӑк награда пачӗ. Ҫак наградӑна эпир хамӑр ӗҫе татах та лайӑхлатса, государство умӗнчи пур парӑмсене те срокчен татнипе ответлӗпӗр. Кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлӗпӗр,—тет Петров юлташ.

Райсовет исполкомӗн председателӗ Осипов юлташ куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялава сыхласа тӑма Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоза пачӗ, колхоз председателӗн заместителӗ **Ягранин** юлташ ҫак чаплӑ та паха ялава чыслӑн тытса тӑма, пур ӗҫре те малта пыма сӑмах пачӗ.

Пухура тухса каланӑ «1-ое Мая» колхоз председателӗ **Васильев** юлташ хӑйӗн колхозӗ пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илни ҫинчен каласа пачӗ.—Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пур йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерсе, ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлӗпӗр, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне хамӑр районрах хӑварассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлӗпӗр,—терӗ Васильев юлташ.

МТС директорӗ **Никонов** юлташ хӑйӗн сӑмахӗнче МТС мӗнле ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗ.

— Пирӗн станци тракторсемпе ҫулталӑкра тумалли ӗҫсен планне тахҫанах ирттерсе тултарнӑ. Пирӗн МТС-ри трактористсем кашни трактор пуҫне 550 гектартан кая мар сухалассишӗн кӗрешеҫҫӗ, — терӗ Никонов юлташ.

Пухура «Победа» колхоз председателӗ **Зайцев** тата ҫӗрӗҫ органӗсемпе МТС работникӗсен союзӗн центральнӑй комитечӗн представителӗ **Родзинский** юлташсем сӑмах тухса каларӗҫ.

Боецсемпе командирсен тата политработниксен ячӗпе колхозниксемпе колхозницӑсене подполковник **Храмов** юлташ саламларӗ. (Храмов юлташ Кольцовка ялӗнче ҫуралса ӳснӗ).

Пухӑва пынӑ ҫынсем ВКП(б) Обкомӗн секретарӗн **А. Т. Ахазов** юлташӑн сӑмахне тимлӗн итлерӗҫ. Ялхуҫалӑх ӗҫӗнче малта пыракансене Ахазов юлташ пысӑк награда илнӗ ятпа саламларӗ тата малашне ҫитӗнӳсем тума сунчӗ.

Юлашкинчен, ВКП(б) Вӑрнар райкомӗн секретарӗ **Коротков** юлташ сӑмах тухса каларӗ. Коротков юлташ районри колхозниксене, колхозницӑсене, трактористсемпе трактористкӑсене тата ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур работниксене тырпулсене хӑвӑртрах тата пӗр тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртме, государствӑна вӑхӑтра тырӑ парса татма чӗнчӗ.

Пуху пысӑк ҫӗкленӳпе Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑнчӗ.

Муркашсем васкамаҫҫӗ

МУРКАШ. **(Телефонпа).** Государствӑна тырӑ памалли графике районри 78 колхозран 2 колхоз кӑна тултарса пыраҫҫӗ. Ҫак вӑхӑта ҫитсе те 9 колхоз государствӑна тырӑ пама тытӑнман. Государство умӗнчи ҫак пӗрремӗш тивӗҫе «Маяк», «Звезда», «Красный борец», «Красная Чувашия» колхозсем начар пурнӑҫлаҫҫӗ. «Звезда» колхоз председателӗ Николаев юлташ государствӑна тырӑ парас ӗҫе тырӑ вырса тата авӑн ҫапса пӗтерсен тин пуҫӑнма шутлать. Кунта государствӑна париччен ех 4 центнер тырра колхозниксене валеҫсе панӑ. Колхозра транспорт бригадине те ячӗшӗн кӑна тунӑ, вӑл шавах ытти ӗҫре ӗҫлет.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз председательне Филиппов юлташа иртнӗ ҫул тырӑ парас ӗҫе тӑснӑшӑн хытӑ ятланӑччӗ. Анчах та Филиппов унтан кирлӗ пек вывод туман, кӑҫал та государствӑна тырӑ пама тытӑнман.

Районра малта пыракан «Красное Сормово», «Крестьянин», Свердлов ячӗпе тӑракан колхозсем те государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе юлса пыраҫҫӗ. Кунта туртӑм вӑйӗ те, транспорт инвентарӗ те ҫителӗклӗ. Анчах та кулленхи графике 25 процент ҫеҫ тултараҫҫӗ.

Государствӑна тырӑ парасси начар пыни районри колхозсенче авӑнсемпе сушилкӑсем ҫуккинчен те нумай килет. «Аврора» колхозӑн тыррине чӗрӗ тесе Шупашкартан икӗ хут каялла янӑ. Кунта пӗр сушилка вӑрҫӑччен ех тума тытӑннӑ, ҫивитти те, урайӗсем те пур, кӑмака кӑна ҫитмест. Анчах та ӑна туса ӗлкӗртме ҫаврӑнӑҫусӑр руководительсен ҫак вӑхӑта ҫитсе те алӑ ҫитмен.

Т. ИВАНОВ.

Комсомолецсем уя тухса та курмаҫҫӗ

ШАХАСАН. Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз тырпулсене пухса кӗртес ӗҫре юлса пырать. Колхозниксем ҫак кунсенче ыраш вырса пӗтерчӗҫ пулин те, ҫурхи тырӑсене вырма васкамаҫҫӗ-ха. Выракан 120 ҫынран 32-шӗ нормӑна тултараймаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен ирхине ӗҫе 7—8 сехетре тухаҫҫӗ те хӗвел ансан киле кӗреҫҫӗ. Ҫитменни ҫине тӑккаласа выраҫҫӗ. 2-мӗш бригадӑра кашни тӑваткӑл метрта 6—9 пучах ӳксе юлать. Ӑна пуҫтарассине йӗркелемен.

Ҫитменлӗхсем чылай. Колхозри агитаторсем, ҫавӑн пекех комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗ те ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерме тӑрӑшмаҫҫӗ. Тырӑ вырма тухнӑранпа стена хаҫатне пӗр номер та кӑларман, калаҫусем те иртермен. Комсомолецсене агитаторсем пулса ӗҫлеме уйӑрнӑ, анчах вӗсем уйхире тухса курман, тырӑ вырма та тухмаҫҫӗ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Францири вӑрҫӑ ӗҫӗсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВАЙӖСЕН ВЕРХОВНАЙ КОМАНДОВАНИЙӖН ШТАБЕ ПӖЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, августӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

«Августӑн 18-мӗшӗнче нимӗҫ ҫарӗсене Нормандире ҫавӑрса илнӗ унка тата хытӑрах хӗссе лартнӑ. Американецсемпе акӑлчансен ҫарӗсем Бриуз хули сывӑхӗнче пӗр-пӗринпе пӗрлешнӗ. Союзниксен хӗвеланӑҫ енчен наступлени туса пыракан ҫарӗсем Орн шывӗ патне ҫитнӗ. Пӗтӗмпех ҫавӑрса илессинчен хӑтӑлма хӑтланса, нимӗҫ ҫарӗсем хӗвелтухӑҫнелле васкаҫҫӗ, анчах та пирӗн ҫарсем ҫав ҫулсем патне сывхарса ҫитеҫҫӗ. Пирӗн кӑнтӑралла наступлени туса пыракан ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, Аржантан хулинчен хӗвелтухӑҫнелле тата хӗвеланӑҫнелле малалла куҫнӑ. Аржантан ҫулӗпе ҫурҫӗр енчен куҫса пырса пирӗн ҫарсем Пьерфитт хули патне ҫитнӗ.

Кунтан ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, наступление вӑйлатса пырса, Див шывӗ урлӑ тата Мотр Дам д'Эстре хули патӗнче Ви шывӗ урлӑ каҫнӑ та Сен-Жюльен-ле-Фокон хулине туртса илнӗ. Дре хули районӗнче ҫав хуларан ҫурҫӗртерехре тата кӑнтӑртарахра Эр шывӗ ҫинчи ҫирӗплетнӗ вырӑна аслӑлатнӑ. Кунтан кӑнтӑрарахра Вандом хулине ирӗке кӑларнӑ. Ланнион-Пемполь районӗнчи миххе пӗтерсе тӑкнӑ хыҫҫӑн Бретань ҫурутравӗн ҫурҫӗр хӗрринче тӑшман хирӗҫ тӑма пӑрахнӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшман ҫарӗсем пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ вырӑнсене, унӑн транспортне, аэродромӗсене, ҫулйӗрӗсене тата снабжени центрӗсене пыра-пыра тапӑннӑ».

* * *

ЛОНДОН, августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

«Союзниксен ҫарӗсем, малалла куҫса пырса, Сена шывӗ патне сывхарса ҫитнӗ, Фалез хулинчен кӑнтӑртарахра тӑшман каялла чакса пыракан коридора татнӑ.

Ҫурҫӗр енчен тата кӑнтӑр енчен куҫса пыракан союзниксен ҫарӗсем Шамбуа хулинче пӗр-пӗринпе пӗрлешнӗ, ҫапла вӗсем Фалез хулинчен кӑнтӑртарахра тӑшман тарса тухмалли хапхана хупса лартнӑ. Союзниксен чаҫӗсем кӑнтӑралла — Монтабар хули патнелле тата ҫурҫӗрелле — йывӑр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ Экуша хули патнелле куҫса пынӑ май, тӑшман кӗрсе ӳкнӗ миххе тата хытӑрах хӗссе лартнӑ. Пютанж хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем тӑшманӑн миххе кӗрсе ӳкнӗ кӑнтӑр пайӗнчи уйрӑм ушкӑнӗсене пӗтерсе тӑкнӑ.

Сен-Пьер-сюр-Див хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Вӗсем Ви шывӗ урлӑ каҫнӑ та Ливаро, Купезарт тата Граншан хулисем патӗнчи вырӑнсене ҫирӗплетнӗ. Шартр хулипе Орлеан хули районӗнче, ҫавӑн пекех Бретаньре те нимӗнле улшӑнусем те пулман.

Союзниксен Нормандири базӑсемпе усӑ куракан авиацийӗ тӑшманӑн хӗвелтухӑҫнелле чакакан танкӗсемпе мототранспорчӗ ҫине тата Сена шывӗ ҫинчи баржисем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ. Нимӗҫсем чакса пыракан районра Орбек хули патӗнчи ҫулсем ҫинче ҫӗмӗрсе тӑкнӑ машинӑсем ытла та нумай купаланса выртаҫҫӗ, ҫавӑнпа летчиксем час-часах хӑйсене кирлӗ объектсене аран-аран тупаҫҫӗ. Ӗнер Фалез хулипе Аржантан хули хушшинчи ҫултан ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре, Сена шывӗ патнелле каймалли вырӑнсенче, 1.400 автомашина ытла тата темӗн чухлӗ танк пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ. Юлашки икӗ кун хушшинче истребитель-бомбардировщиксем Сена шывӗ ҫинче 85 пысӑк баржӑна шыва путарнӑ».

СОЮЗНИКСЕН ВӐТАҪӖР ТИНӖС ТАВРАШӖНЧИ ХӖҪПАШАЛЛА ВАЙӖСЕН ШТАБЕ ПӖЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, августӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: августӑн 18-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле нимӗҫсен торпеда яракан катерӗсен соединенийӗ союзниксен Кӑнтӑр Францире ҫарсем антаракан тата снаряжени пушатакан суднисене атакӑлама хӑтланнӑ. Америка миноносецӗсем нимӗҫсен ҫак атакине сирсе янӑ, кӗске вӑхӑт хушшинчех вӗсем тӑшманӑн 4 катерне пӗтерсе тӑкнӑ.

Тӑшман начар хирӗҫ тӑнине пула, 7-мӗш армин чаҫӗсем хӑвӑрт наступлени туса пынӑ, Кӑнтӑр Францири плацдармӑн лаптӑкне 1.000 тӑваткӑл мильӑран та ытларах аслӑлатнӑ, вӗсем Тулон хулинчен 10 километрта ларакан пункт патне ҫитнӗ. Фронтӑн хӗвеланӑҫ тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ участокӗсенче Аржан шывӗ улӑхӗн икӗ енӗпе те американецсен чаҫӗсем темиҫе километр малалла кайнӑ. Сольес-Пон, Ло-Рокбрюсан, Гареу, Бриньоль, Вен тата Селерн хулисене туртса илнӗ. Француз чаҫӗсем тӑшман Бен сӑмсахӗ районӗнче хирӗҫ тӑнине пусӗпех ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

ЛОНДОН, августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: 7-мӗш арми чаҫӗсем Кӑнтӑр Францире союзниксен ҫарӗсем анса ларнӑ районӑн ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ участокӗнче, ҫав тери хӑвӑрт куҫса, 20 миля ытла малалла кайнӑ. Ҫак районра кӗрешекен американецсен пехотнӑй чаҫӗсемпе французсен бронетанковӑй чаҫӗсем Сен-Максимен, Риан тата Баржоль хулисене ирӗке кӑларнӑ.

Фронтӑн хӗвелтухӑҫ флангӗнче Драгиньян хулипе тинӗс хушшинче американецсен чаҫӗсем ҫурҫӗрелле каякан ҫула татнӑ, вӗсем Кастеллано тата Ла Бастид хулисем патне тухнӑ, тыткӑна илнӗ нимӗҫсен шучӗ халӗ 12 пин ҫынна ҫитет ӗнтӗ.

Италире союзниксен ҫарӗсем Адриатика тинӗсӗ хӗрринче Пергола хулине туртса илнӗ. Флоренци хулинчен икӗ енче те лару-тӑру улшӑнман. Йывӑр бомбардировщиксем ӗнер Плоешти районӗнчи (Румыни) вӑрҫӑ объекчӗсене тапӑннӑ тата Чуприя хули патӗнчи (Югослави) порт сооруженийӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Союзниксен тактика авиацийӗ Кӑнтӑр Францире кӗрешекен ҫарсене хӑватлӑн пулӑшса тӑнӑ тата тӑшманӑн Ҫурҫӗр Италири, Югославири, Албанири, Грецири сооруженийӗсене тапӑннӑ.

ДЕ ГОЛЛЬ ФРАНЦИРЕ

ЛОНДОН, августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Шербурти радиостанци ҫапла пӗлтернӗ: Де Голль генерал Францие килчӗ, тенӗ.

Союзниксен авиацийӗн ӗҫӗсем

ЛОНДОН, августӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официально ҫапла пӗлтернӗ: августӑн 19-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем Германие тапӑннӑ. Бомбӑсене пуринчен ытла Бремен тата Штеркрад хулисем ҫине пӑрахнӑ. «Москито» йышши самолетсем Берлин ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бельгири тата Францири темиҫе объект ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ.

ЛОНДОН, августӑн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: августӑн 19-мӗшӗнче Англи авиацийӗ Парижран 15 миля ҫурҫӗртерехре ларакан Лиль Аланри самолет-снарядсен ҫӗр айӗнчи складне тапӑннӑ. Ҫав склад ҫине кутаранччен бомбӑсем пӑрахни пулман. Летчиксем каланӑ тӑрӑх, тапӑну питӗ ӑнӑҫлӑ пулса иртнӗ.

Августӑн 19-мӗшӗнче Америка бомбардировщикӗсен соединенийӗсем Францири аэродрома, авиамоторсен заводне, 2 горючи складне, ҫавӑн пекех тата Сена шывӗнчен ҫурҫӗртерехри чугун ҫул объекчӗсемпе тӑшман автотранспортне тапӑннӑ.

РУЗВЕЛЬТ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, августӑн 17-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Рузвельт Гавай утравӗсемпе Алеут утравӗсем ҫине кайса килнӗ, вӑл мӗн пурӗ 15.000 миля ҫӳренӗ. Вашингтона ҫитсен, Рузвельт поездӗпе пресс-конференци пулса иртнӗ. Ҫав пресс-конференцире Рузвельт ҫапла каланӑ: Германипе Япони союзниксен ҫарӗсем вӗсен чиккине ҫитиччен парӑнсан та, союзниксем Германипе Японие пурпӗрех кӗрсе каяҫҫӗ, вӗсене оккупацилеҫҫӗ, тенӗ.

Пӗтӗм тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑра Германи, перемирипе усӑ курса, хӑй ҫӗршывне оккупацилессинчен хӑтӑлса юлнӑччӗ. Халь вӑл урӑх апла хӑтӑлса юлаймӗ, тенӗ Рузвельт. Германин шалти йывӑрлӑхӗсем ҫинчен, нимӗҫсен ҫар машини сывӑх вӑхӑтрах ҫӗмӗрӗлсе каясси ҫинчен пӗлтерекенскерсем ҫинчен, эпӗ нимӗн те пӗлместӗп, тенӗ Рузвельт. Германире тата пысӑкрах йывӑрлӑхсем сиксе тухӗҫ тесе шанатпӑр эпир, анчах та вӑл пирӗн кӗтни кӑна пулса тӑма пултарать. Германи халӑхӗн психологине тата унӑн ҫар командованийӗн психологине те вӗренсе пӗлме тивӗҫлӗ. Германи халӑхӗ те, унӑн ҫар командованийӗ те яланах ҫакӑн пек хӑтланаҫҫӗ: тӑшман Германи чиккине ҫитме пуҫласан, вӗсем, тӑшман ҫарӗсене Германие кӗртесшӗн мар пулса, парӑнаҫҫӗ. Тӗнчери пӗррӗмӗш вӑрҫӑра та нимӗҫсем союзниксен ҫарӗсем Германи ҫӗрне кӗме тытӑниччен хирӗҫ тӑма пӑрахса парӑнчӗҫ. Анчах та хальхинче апла тума парас ҫук. Союзниксем хальхинче те апла тума парсан, нимӗҫсем хӑйсен ҫамрӑк ӑрӑвне: нимӗҫсем иртнӗ вӑрҫӑра ҫиеле тухрӗҫ, тесе вӗрентӗҫ.

Унтан Рузвельт ҫапла каланӑ: Японие килӗшӗве юратакан ытти ҫӗршывсенчен пуринчен те уйрӑм тытас пулать. Килӗшӗве юратакан ытти ҫӗршывсемпе лайӑх килӗшӳллӗ пурӑнма хатӗррине тата ҫапла пурӑнма пултарнине ӗҫпе кӑтартса парсан кӑна килӗшӗве юратакан ҫӗршывсен ҫемьине кӗртме юрать ӑна.

Президент малалла ҫапла каланӑ: Лӑпкӑ океан тӑрӑх ҫӳрени мӗн кӑтартса пани ҫинчен эпӗ ҫак сывӑх вӑхӑтрах ҫар руководителӗсемпе, Хэллпа, ҫавӑн пекех тата конгресс лидерӗсемпе сӳтсе-явма шутлатӑп, анчах та эпӗ хам ҫӳрени ҫинчен конгреса официальнӑй доклад туса пама шутламастӑп, тенӗ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙӖ ЯПОНИЕ ТАПӐННИ

НЬЮ-ЙОРК, августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). США-н ҫар министерстви ҫапла пӗлтернӗ: паян «Вӗҫекен крепость Б—29» йышши хӑватлӑран та хӑватлӑ бомбардировщиксем каллех Кюсю утравӗ ҫинчи Явата промышленность районне тапӑннӑ.

ТОКИО, августӑн 20-мӗшӗ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Япони ставки ҫапла пӗлтернӗ: паян Америка авиацийӗн Китайри базӑсемпе усӑ куракан самолечӗсем, 60 самолета яхӑн, ушкӑн хыҫҫӑн ушкӑн пырса, Кюсю утравне тата Цюгокун хӗвеланӑҫ районне тапӑннӑ. Тапӑну пӗр сехете яхӑн пынӑ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар Хули Совечӗн депутачӗсене пӗлсе тӑма

1944 ҫулхи августӑн 24-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре, Пионерсен Ҫуртӗнче (Карл Маркс урамӗ, 11-мӗш № ҫурт) ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар хули Совечӗн XXVI сессийӗ пулса иртет.

Сесси ҫак ыйтӑва сӳтсе явать: **Шупашкар хули валли вутӑ хатӗрлесси тата турттарса килесси.**

Ӗҫҫынни депутачӗсен Шупашкар Хули Совечӗн депутачӗсем сессие хӑйсен удостоверенийӗсемпе кӗреҫҫӗ.

Шупашкар Хули Совечӗн Исполкоме.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
паянпа ыран
(августӑн 22-мӗшӗпе 23-мӗшӗнче)
ЮЛАШКИ ХУТ
саслӑ, музыкӑллӑ комеди
«СВИНАРКА И ПАСТУХ»
кӑтартать.
Сеанссем ҫак вӑхӑтра пуҫланаҫҫӗ:
12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать.
Касса ирхине 10 сехетренех ӗҫлеме тытӑнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительне секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.